Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

55 (7372) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи июлĕн (утă) 5-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ял хуçалăх çыравĕ пуçланчĕ

Июлĕн 1-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх çыравĕ пуçланчĕ. Çак тĕлĕшпех районти статистика уйрăмне шăмат кун ĕçлĕ тĕл пулăва Чăвашстат ертӳçи – Пĕтĕм Раççейри çырава хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри Правительство комиссийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ю.К. Марков, Чăвашстат ертӳçин çумĕ Э.Г. Максимова тата çырав ирттерес енĕпе пирĕн районта çирĕплетнĕ специалист А.Ф. Мамейкина килсе çитрĕç. Малтанах Юрий Климентьевич статистика органĕсем умĕнче тăракан задачăсемпе тата çырав тĕллевĕпе паллаштарчĕ:

– Раççейре, ял хуçалăх çыравне нумай вăхăтран ирттерме палăртрĕç. Ун пек ĕçе юлашки хут 1920 çулта йĕркеленĕ. Çавăнтанпа ялта пысăках мар çыравсем кăна ирттернĕ. Юлашки хут 1996 çулта выльăхсен йышне шута илнĕ. Раççейри ял хуçалăхĕнче çав тери пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Çĕнĕрен экономика условийĕсем йĕркеленчĕç, çĕр хутшăнăвĕсем лайăхланчĕç, уйрăм çын хуçалăхĕ аталанса пырать. Нумай енлĕ экономика вăй илет, унта тавар туса илекенсен виçĕ ушкăнĕ кĕрет – ял хуçалăх организацийĕсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, уйрăм çынсен хуçалăхĕсем. Çыравра вĕсене статистика енчен уйрăммăн шута илеççĕ. Çакна пурте ăнланмалла палăртас килет. Ял хуçалăх çыравне ирттерни федерацин информаци ресурсĕсене йĕркелеме, ял хуçалăх тытăмне, унăн ресурсĕсемпе мĕнле усă курнине палăртса, çавăн пекех муниципалитет тăрăхĕсенче ял хуçалăхĕ мĕнлерех аталанни çинчен тулли информаци илме май памалла.

Çырав çавăн пекех ял хуçалăхĕсенчи лару-тăрăва тарăнрах тĕпчесе пĕлме, çĕр тата аграри реформисене ирттернĕ май пулса иртекен улшăнусене, ял хуçалăх продукчĕсем туса илекенсен кашни категорине туллин палăртма, çĕршывăн апат-çимĕç ресурсĕсене пур енлĕн пĕлсе тăма, çавăн пекех ытти çивĕч ыйтусене шута илме пулăшмалла. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсем агропромышленноç политикине малалла çирĕп тытса пыма, апат-çимĕç комплексĕ çинчен тулли информаци илме, çапла вара çĕршывăн апат-çимĕç хăрушсăрлăхне туса хума пулăшĕç.

Халăхра çырава хушма налук хурассипе йĕркелеççĕ-ши, текен сас-хура нумайăшне тĕрĕс те тулли хурав пама иккĕлентерет. Ку ыйту çине Юрий Климентьевич çапла хурав пачĕ: “ Çырав тĕллевĕ – налук хурасси мар, ял хуçалăх производствинче лару-тăрăва туллин палăртса, тавар туса илекенсене патшалăх пулăшăвĕ парассине лайăхлатасси”,- терĕ.

Енчен те ялта пурăнакан çын ял хуçалăх продукчĕсем туса илмест, çĕрпе усă курмасть, арендăна илмест, ку тĕлĕшпе харпăрлăх хуçи пулса тăмасть, выльăх-чĕрлĕх тытмасть пулсан, вăл çырава лекмест. Хулара пурăнакансен тĕлĕшпе те çавăн пекех.

Уйрăм çынсен çырава хутшăнассипе хутшăнмасси – ирĕклĕ пулăм. Çавăнпа пĕрлех çакна манас марччĕ, çырава хутшăнасси – Раççейри кашни гражданинăн тивĕçĕ. Çырав çинчен калакан саккунра та çаплах çырнă, обществăлла тивĕç тенĕ.

Пирĕн районта ял хуçалăх çыравĕ вăхăтĕнче шута илмелли çак объектсене палăртнă:

Уйрăм хуçалăх тытакансем – 1540;
Хресчен (фермер) хуçалăхĕ – 54;
Уйрăм предприниматель – 2;
Сад пĕрлешĕвĕ – 42, вĕсенче 1.566 участок.

Паянхи куна уйрăм хуçалăх тытакансем 10 процент, сад пĕрлешĕвĕсем 1,9 процент çырав витĕр тухнă.

Канашлу иккĕмĕш координатор уйрăмне кĕрекен Çатракасси ял тăрăхĕнчи иккĕмĕш инструктор уйрăмĕнче тăсăлчĕ. Кунта Чăвашстат ертӳçин çумĕ Э.Г. Максимова çырав хучĕсене çырассине тепĕр хут ăнлантарчĕ. Çыравçăсен ĕçре тĕл пулакан ыйтăвĕсем çине хуравларĕ.

Юлашкинчен çыравра ăнăçу сунчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**



**Сăн ӳкерчĕкре: Чăвашстат пуçлăхĕ Ю.К. Марков пирĕн районта çырав пынипе паллашать.**

**РАЙОН АДМИНИСТРАЦИЙĔН ПУÇЛĂХĔН ХУШĂВĔ**

**2006 çулхи июнĕн 30-мĕшĕ 256 №**

### 2006 çулхи вырмари ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинчи конкурс çинчен

Механизаторсене анлăн явăçтарма тата вырма ĕçĕсене агротехникăпа палăртнă кĕске тапхăрта пахалăхлă ирттерме

1. Ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинче августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 15-мĕшĕччен конкурс ирттерес, итогĕсене кашни эрнере пĕтĕмлетес.

2. Вырмара механизаторсем хушшинче агротехника требованийĕсене, хăрушсăрлăх техникине, ĕç дисциплинине пăхăнса чи пысăк кăтартусем тунисем çĕнтернĕ тесе шутлас.

3. Конкурсра призлă вырăнсем йышăннисем валли çакăн пек премисем çирĕплетес, тырă çапса тĕшĕлемелли эрнери нормăсене тултарнисене свидетельствăсем парас:

**Дон-1500, Енисей-954 комбайнсен йышĕнче – 280 тонна:**

1 вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство),
2 вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство),
3 вырăн 100 тенкĕ (свидетельство).

**Енисей-1200 комбайнсен йышĕнче – 224 тонна:**

1 вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство),
2 вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство),
3 вырăн – 100 тенкĕ (свидетельство).

**Нива-СК-5 комбайнсен йышĕнче – 182 тонна:**

1 вырăн – 300 тенкĕ (свидетельство),
2 вырăн – 200 тенкĕ (свидетельство),
3 вырăн – 100 тенкĕ (свидетельство).

2006 çулхи вырма итогĕсемпе мала тухнă экипажсем валли 3 преми çирĕплетес:

**Пуринчен нумай тырă çапса тĕшĕлесе мала тухнă комбайнсен экипажĕсем хушшинче:**

1 вырăн – 1200 тенкĕ, 1 степеньлĕ диплом, чемпион хăйăвĕ.
2 вырăн – 1000 тенкĕ, 2 степеньлĕ диплом.
3 вырăн – 800 тенкĕ, 3 степеньлĕ диплом.

**Вырмара тырă турттарса мала тухнă водительсем хушшинче:**

1 вырăн – 600 тенкĕ, 1 степеньлĕ диплом, чемпион хăйăвĕ,
2 вырăн – 500 тенкĕ, 2 степеньлĕ диплом,
3 вырăн – 400 тенкĕ, 3 степеньлĕ диплом.

**Тырă-пулă сăвăрса мала тухнă звеносем хушшинче:**

1 вырăн – 1500 тенкĕ (2006 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕн пур кирлĕ вăрлăхăн 100 процентне кондицие çитермелле), 1 степеньлĕ диплом,

2 вырăн – 1200 тенкĕ (çӳлерех палăртнă срока мĕн пур кирлĕ вăрлăхăн 95 процентне кондицие çитермелле), 2 степеньлĕ диплом.

3 вырăн – 1000 тенкĕ (çӳлерех палăртнă срока мĕн пур кирлĕ вăрлăхăн 90 процентне кондицие çитермелле), 3 степеньлĕ диплом.

4. Конкурс итогĕсене кашни эрнере массăллă информаци хатĕрĕсенче пичетлемелле.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Вырма умĕн**

## Комбайнерсен канашлăвĕнче

**Иртнĕ эрне кун Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра районти комбайнерсен канашлăвĕ пулнă. Кунта кăçалхи вырмана хатĕрленсе ирттерес ыйтусене сӳтсе явнă.**

**Канашлура район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тухса каланă. Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов доклад тунă.**

**Вырма – ял ĕçченĕшĕн уйрăмах ответлă тапхăр. Ĕçе кирлĕ пек йĕркеленинчен, экономика условийĕсем туса панинчен, ĕçшĕн тивĕçлипе тӳленинчен килет ĕç ăнăçлăхĕ.**

**Канашлура вырмана ăнăçлă ирттерме район шайĕнче механизаторсем хушшинче конкурс ирттерес ыйтăва сӳтсе явнă. Ĕçшĕн тивĕçлипе тӳлес ыйтăва та пăхса тухнă. Райхаçатăн паянхи номерĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ вырмари механизаторсем хушшинче конкурс ирттерессi çинчен кăларнă хушăва тата ĕçшĕн тӳлеме сĕннĕ условисене пичетлетпĕр.**

**Кашни ĕçчен тивĕçлĕ ĕç укçи илтĕр**

## Вырма вăхăтĕнчи ĕç условийĕсен сĕнĕвĕсем

Кĕçех ял хуçалăхĕшĕн тепĕр ответлă тапхăр пуçланать. Пахалăхлă тыр-пула вăхăтра пуçтарса илесси ĕçшĕн тивĕçлĕ шайра тӳленинчен те нумай килет. Çавăнпа та туса илнĕ продукцие пуçтарса кĕртнĕшĕн тӳлемелли условисем туса парасси çине тимлĕ пăхмалла. Вырма вăхăтĕнче уйхирте, йĕтем çинче ĕçлекенсене хуçалăхăн калаçса татăлнă, çирĕплетнĕ ятарлă условисемпе тӳлемелле. Асăннă условисене кашни çулах çĕнĕрен пăхса тухса çĕнетсе пымалла.

Вырма умĕн кашни хуçалăхăнах ĕç условисене пăхса тухса хак пама ятарлă комисси çирĕплетмелле. Çак комисси ĕç пуçланиччен 10 кун маларах уйсене çитсе тыр-пул тухăçне, унăн тасалăхне, нӳрĕклĕхне, улăм мĕн чухлĕ тухассине, вырас лаптăкри тыр-пул выртнипе выртманнине хакласа кашни уйпах уйрăм акт çырса хатĕрлемелле. Çак ĕçе туса ирттерсен сменăра ĕçлемелли нормăсене, тырă пуçтармалли уйсен калăпăшне, вăтам тухăçне кура вырма ĕçĕсен вăтам тапхăрне палăртмалла. Тӳлев расценкисене те асăннă кăтартусене шута илсе тумалла. Техникăна юсасси çине тимлĕ пăхмалла. Районти ĕç укçин шайĕ ӳснипе килĕшӳллĕн ял хуçалăх управленийĕ кăçал пĕр экипажа комбайн юсаса ĕçе хатĕрленĕшĕн 4000 тенкĕрен кая мар тӳлеме сĕнет. Сакăр çултан аслăрах комбайнсене юсанăшăн вара ытларах тӳлессине те шута илмелле. Çав вăхăтрах кĕрхи ĕçсем вĕçленсен комбайнсене тирпейлесе тасатса вырнаçтарса лартассине те ĕç укçипе интереслентермелле, комбайн вырма тапхăрне ванмасăр ĕçлесе ирттернишĕн те ĕç укçипе хавхалантарма сĕнетпĕр.

Тĕпрен илсен, тыр-пул пуçтарнăшăн тӳлесси:

- пĕр тонна çапса пуçтарса илнĕшĕн,
- пĕр гектар пуçтарнă лаптăкшăн ĕç нормипе тата тариф ставкисемпе çыхăнса пымалла.

Раççей законĕсемпе килĕшӳллĕн, ĕç укçине тӳлесси пĕрремĕш разрядлă ĕçшĕн уйăхри 1100 тенкипе танлашакан виçипе çыхăнтарса пымалла.

Хушса тӳлесси вара ĕçе пысăк пахалăхпа туса ирттернĕшĕн тĕп ĕç укçи çине пулса пымалла. Ĕç пахалăхне паллăсемпе хаклама пулать.

Вĕсем: “питĕ лайăх”, “лайăх”, “вăтам” паллăсем.

“Питĕ лайăх” паллăшăн тĕп ĕç укçи çине 50 процент, “лайăх” - 30 процент хушса тӳлемелле.

“Вăтам” паллăшăн вара тĕп ĕç укçи кăна тӳлемелле.

Кĕске вăхăтра тыр-пул пуçтарса тирпейлес тĕллевпе (паллах, çанталăк условийĕсем пулсан) пĕрремĕш 10 кун массăллă тыр-пул пуçтарнă тапхăрта механизаторсене ĕçшĕн тӳлемелли расценкăсене 100 процент таран хăпартма пулать. Тепĕр 5 кун хушши 50 процент хушса тӳлеме юрать.

Ытти ĕçлекенсен расценкисене тыр-пул пуçтарнă çĕре хутшăннăшăн 30 процент ӳстерме юрать.

Ку тӳлевсем, паллах, сменăри нормăсене пурнăçласан, тыр-пула тăкаксемсĕр тирпейлесе пырсан пулмалла.

Ĕç кăтартăвĕсемшĕн хавхалантармалли тепĕр май – сезон валли палăртнă нормăна еплерех пурнăçланине шута илсе хушса тӳлесси. **(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

**Симĕс ĕç çи**

### Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче июлĕн 4-мĕшĕ тĕлне выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç мĕнле пынине кăтартни

**Колонкăсенче: 1. Нумай çул ӳсекен курăксем çулнă. 2. Утă хатĕрленĕ. 3. Сенаж хывнă. 4. Силос хывнă (процентпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 28 | 14 | 0 | |
| “Волга” | 58 | 17 | 0 | |
| “Восток” | 79 | 96 | | 34 |
| “Герой” | 32 | 14 | 39 | 0 |
| ЗАО «Агро-Урожай» | 100 | 100 | | |
| К. Иванов яч. хис. | 56 | 7 | 60 | 48 |
| Ильич яч. хис. | 53 | 22 | 49 | 0 |
| “Колос” | 8 | | | |
| Ленин яч. хис. | 40 | 22 | 30 | 0 |
| “Лидер” | 26 | 21 | 13 | 0 |
| ГУП ЧР «ПФ «Моргаушская» | 83 | | | |
| “Нива” | 20 | 10 | 0 | |
| “Оринино” | 57 | 34 | 0 | 42 |
| “Передовик” | 12 | 12 | 21 | 0 |
| “Свобода” | 60 | 14 | 22 | |
| “Сеятель” | 21 | 21 | 0 | |
| Суворов яч. хис. | 32 | 14 | 4 | |
| ООО АФ «Рассвет» | 26 | 13 | | 17 |
| ОАО АФ «Нива» | 2 | | | |
| “Ударник” | 93 | 19 | 80 | 0 |
| “Хлебороб” | 27 | 8 | 0 | |
| Чапаев яч. хис. | 38 | 17 | | 0 |
| “Чемеево” | 59 | 38 | | 51 |
| Чкалов яч. хис. | 43 | 12 | 0 | 38 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 20 | 20 | 0 | |
| **Районĕпе** | **41** | **19** | **23** | **20** |

## ПАЯНХИ НОМЕРТЕ

**2 стр. - Кĕр мăнтăр килтĕр тесе.**
**3 - 6 стр. - Пай çĕрĕсен хуçисен пĕлтерĕвĕсем (заказ шучĕпе пичетленет).**
**7 стр. - Мĕн акнине çухатусемсĕр пуçтарса илесчĕ.**
**8 стр. - Налук инспекцийĕ асăрхаттарать.**